22-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942
МАРТ
28
ШАМАТКУН
73(6098) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Суракине хатĕрленес тĕлĕшпе пысăк тухăçлăхпа тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕççынни депутачĕсен районсенчи Совечĕсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

36. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Хĕрлĕ Çар» колхоз (колхоз председателĕ Е. П. Анкудинов юлташ). [illegible] Колхоз хирне 700 лав тислĕк кăларнă, 30 центнер кĕл, 20 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрленĕ. Колхозра лашасем пурте лайăх, мăнтăр.

37. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Хĕрлĕ Çар» колхозăн бригадирĕ П. Данилов юлташ. Данилов юлташăн бригади хирне 400 лав тислĕк кăларнă, унсăр пуçне тата 300 лав тислĕк хатĕрлесе хунă, 20 центнер кĕл, 13 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрленĕ.

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен канашлăвĕ

Паян ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвĕ уçăлать.

Канашлăва социализмлă ялхуçалăхĕн паттăрĕсем — колхозсемпе машинăпа тракторăн станцийĕсенчи чи лайăх çынсем, ĕçре новаторсем, [illegible] выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсем, трактористсем, комбайнерсем, звеновойсем, бригадирсем, колхоз председателĕсем, ялхуçалăх специалисчĕсем пухăннă. Канашлура Мари республикин представителĕсем те пур.

Пирĕн колхозсемпе машинăпа тракторăн станцийĕсем иртнĕ çул пысăк çитĕнӳсем турĕç. [illegible] Агротехника правилисене [illegible] 1941 çулти плана ытлашшипех тултарчĕç. Майракаллă шултра выльăх хисепĕ — 21,2 процент, сурăхсен хисепĕ 28,7 процент ӳсрĕ. [illegible] государство панă задание чылай пурнăçларĕç. Иртнĕ çулта государствăна тырпул парас обязательствăна 618 колхоз, [illegible] 1214 колхоз, [illegible] 1236 колхоз срокчен тултарчĕç.

Республикăра вăтам шутпа кашни гектартан [illegible] тĕштырă туса илнĕ. [illegible] Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхоз вăтам шутпа кашни гектартан 200 пăт ытла тĕштырă туса илчĕ. Советски районĕнчи «Сеятель» колхоз кашни гектартан вăтам шутпа 23-шер центнер, «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз 18-шар центнер, Шупашкар районĕнчи «Осоавиахим» колхоз 20-шер центнер ытла, Первомайски районĕнчи «Трудовик» колхоз 17-шер центнер тĕштырă туса илчĕç.

Советски районĕнчен канашлăва Ульяна Васильева, «Сеятель» колхоз председателĕ Н. Андреев юлташсем пысăк çитĕнӳсемпе килчĕç. Ульяна Васильева Чапаев ячĕпе тăракан колхозăн сурăх фермин бригадирĕ пулса ĕçлет. 1941 çулта вăл 20 сурăхран 58 путек илсе çитĕнтерне, кашни сурăхран вăтам шутпа 2,6 килограмм çăм касса илнĕ. «Сеятель» колхозăн сысна фермин ĕçре иртнĕ çул кашни сысна аминчен вăтам шутпа 23,5 çăвăр илнĕ, пурне те пăхса çитĕнтернĕ. Ялхуçалăх ĕçĕнче [illegible] пысăк çитĕнӳсем туса ĕçлекен çынсен списокне татах та тăсма пулать. Вĕсем хăйсен пĕтĕм вăйне, пĕтĕм пултарулăхне çĕнтерӳ тăвас ĕçе хураççĕ.

Социализмлă ялхуçалăхĕнчи ĕççыннисен, колхозниксемпе колхозницăсен, трактористсемпе трактористкăсен, комбайнерсен тата ялхуçалăхĕнчи ытти работниксен умĕнче кăçал татах та пысăк задача тăрать.

Нимĕç фашисчĕсен урнă бандисене пĕтерсе тăкас задачăна âнăçлăн туса пырас тĕлĕшпе хамăрăн паттăр Хĕрлĕ Çарăн, Хĕрлĕ Флота, хамăрăн социализмлă отечествăна тырпул, аш, çăкăр, сĕт, çу, чĕртавар парса тăмалла. [illegible]

[illegible]

[illegible] хастарлăхне, пултарулăхне çĕклесе пырас пулать, стахановла движенипе социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пырас пулать. Колхозсенче ĕç дисциплинине çирĕплетес пулать, кашни колхозник колхоз производствинче тимлĕн ĕçлемелле тăвас пулать. Ялхуçалăхĕнчи кашни машинăпа туллин усă курмалла, кашни çамрăк выльăха пăхса çитĕнтермелле.

Çуракине âнăçлăн тата хăй вăхăтĕнче туса ирттерни — вăйлă тырпул туса илес ĕçри малтанхи утăм пулса тăрать. Анчах ăна туса ирттерме эпир халĕ хатĕр мар-ха. Çуракги валли паха вăрлăхсем хатĕрлесси, уйхире çемçетме тислĕк, торф, юшкăн, кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, минераллă удобрени ытларах кăларасси, ялхуçалăх машинисене юсасси, ака валли лашасене хатĕрлесси — паян тумалли ĕçсем. Вĕсене туса çитерме пирĕн пурин те пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле. Çуракине пысăк пахалăхпа, кĕске срокра туса ирттерсен кăна вăйлă тырпул туса илес задачăна эпир âнăçлăн пурнăçлăпăр.

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен канашлăвĕ колхозсем умĕнче тăракан задачăсене пурнăçа кĕртмелли майсене палăртса хăварĕ, районсем, колхозсем хушшинчи социализмлă ăмăртăва çӳле çĕклеме пулăшĕ.

Канашлу делегачĕсене салам!

Ярославль облаçĕнчи вырăнти промышленноçра ĕçлекен рабочисемпе служащисене наградăлачи

Хĕрлĕ Çар валли çунасемпе йĕлтĕрсем туса кăларас тĕлĕшпе правительство панă заданисене âнăçлăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх наградăланă:

ĔÇЛĔХ ХĔРЛĔ ЯЛАВ орденĕпе — А. Г. Коршунова, А. Н. Ларионова, Н. И. Лыкова, С. Г. Овчинникова, Т. В. Петрова, Д. Г. Субботина.

«ЗНАК ПОЧЕТА» орденĕпе — 15 çынна, **«ЗА ТРУДОВУЮ ДОБЛЕСТЬ» медальпе** — 4 çынна, **«ЗА ТРУДОВОЕ ОТЛИЧИЕ» медальпе** — 9 çынна наградăланă.

(ТАСС).

И. Татекава господин Японие тухса кайни

Кăçалхи мартăн 26-мĕшĕнче Японин ССР Союзĕнчи чрезвычайнăй тата полномочнăй посолĕ господин И. Татекава Куйбышев хулинчен Японие тухса кайнă.

Вокзалра И. Татекава господина Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн Инçетри Хĕвелтухăçĕн 2-мĕш отделĕн заведующийĕ Ф. К. Царапкин юлташ, Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн Протокольнăй отделĕн заведующийĕн ĕçĕсене туса пыракан П. А. Бушуев юлташ, Япони ĕçĕсен поверенннăйĕ г. Ф. Миякава ертсе пынипе Япони посольствин составĕ, çавăн пекех тата Иран посолĕ г. М. Саед, Афганистан посолĕ г. Султан Ахмед Хан, Турци посолĕ г. Хайдар Актай, Швеци посланникĕ г. В. Ассарсон тата Болгари посланникĕ г. Стаменов ăсатнă. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 26-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Мартăн 26-мĕшĕнче фронтра паллă улшăнусемех пулман.

Мартăн 25-мĕшĕнче нимĕçсен 11 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 6 самолет пĕтнĕ.

* * *

Мартăн 25-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем нимĕçсен темиçе танкне тата бронемашинине, войскăсемпе грузсем тиенĕ 41 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 58 лавне, 5 орудине, 12 минометне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, горючисен складне сирпĕнтерсе янă, чугунçул çинчи 10 вагона тата 3 паровоза çĕмĕрнĕ, противникăн пехотине 2 ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн стрелковăй часть, тăшман вăйлăн хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, халăх пурăнакан пункта йышăнса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн çĕршер вилли выртса юлнă. Трофейăсем тытса илнĕ: 3 оруди, 6 миномет, 17 пулемет, 17 автомат, 100.000 патрон тата ытти çар пурлăхĕсем. Тепĕр участокра пирĕн артиллеристсем нимĕçсен 2 блиндажне çĕмĕрнĕ, грузсем тиенĕ 20 лавне пĕтерсе тăкнă тата противникăн пехотине пĕр ротăна çити сапаласа янă.

* * *

Пирĕн артиллерин дивизионĕ (Калинин фрончĕ) пĕр кун хушшинче тăшманăн 3 танкне персе çĕмĕрнĕ тата минометсен пĕр батарейине пусарса лартнă. Тепĕр участокра Ольшев юлташ командир пулса ертсе пыракан артиллеристсем, противникăн контратакисене сире-сире пăрахса, нимĕçсен 7 танкне, грузсем тиенĕ 25 лавне, минометсемпе пулеметсен темиçе точкине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче противник танксемпе атака тума хăтланнă. Политрук Юрченко командир пулса ертсе пыракан подразделенири боецсем, танксене хирĕç пемелли пăшалсенчен персе, противникăн колоннине сапаласа янă. Çапăçура Лядин красноармеец уйрăмăнах палăрнă. Вăл нимĕçсен йывăр танкне 35 метр çывăха пыма панă та пилĕк хутчен персе ăна сирсе кăларнă. Степанов юлташăн расчечĕ 70 метрлă дистанцирен персе, тăшманăн иккĕмĕш танкне çĕмĕрнĕ.

* * *

Смоленск облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекен К. юлташăн партизанла отрячĕ юлашки вăхăтра нимĕçсен 135 салтакне тата 9 офицерне пĕтерсе тăкнă. Партизансем темиçе вуншар винтовка, миномет, патронсем тата нимĕçсен штабĕн хаклă документĕсене тытса илнĕ. Совет патриочĕсем 13 тĕлте телефон линине татнă тата чугунçул кĕперне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем хĕсе пынипе каялла чакакан нимĕçсен фашистла бандичĕсем ялсене çунтарса яраççĕ, мирлĕ халăха, вăл шутра старниксене, ачасене, хĕрарăмсене, вĕлереççĕ. Ленинград облаçĕн Залучски районĕнче гитлеровецсем 10 яла: Большой Ост., Лужки, Шубино, Лебединец, 1-мĕш Никулино, 2-мĕш Никулино, Громаково, Заньково, Горбы, Рядово ялĕсене çунтарса янă. Çав ялсенче гитлеровецсем 100 çынна çити персе пăрахнă. Ансăртран кăна Григорий Харитонович Степанов колхозникăн хăтăлса юлма май килнĕ. Персе пăрахнă чухне, персе ярсассăнах, вăл ӳкнĕ те вилнĕ çынсем хушшинче темиçе сехет выртнă. Степанов юлташ çапла каласа кăтартать: «Пире персе пăрахма илсе кайнă чухне вăтă колхозник Иванов ыттисене лăплантарса çапла каласа пычĕ: «Хресченсем, хамăр тăван Русьшăн вилмешкĕн ан хăрăр, халăх вĕсене пирĕншĕн тавăрĕ».

* * *

1942 çулти мартăн 1-мĕшĕнче Финлянди правительстви икĕ миллиард маркăлăх государство заемĕ кăларнă. Анчах та тигчетлесе кăларнă официальнăй данăйсем çакна кăтартаççĕ: Финлянди правителĕсем ССР Союзне хирĕç пыракан кирепсĕр вăрçа тăсса пымашкăн çĕнĕ средствăсем мобилизацилеме хăтланни пуçĕпех путланнă. Мартăн 20 кунĕ хушшинче заемăн виççĕмĕш пайне те вырнаçтарайман, çакăнпа вара заема сарасси пĕтсе ларнă. Заем облигацийĕсене хăшпĕр банксемпе предприятисем кăна илнĕ. Халăх облигацисене илмест. Çакă питех те кăтартуллă: «Суомен Сосиальдемократти» хаçат, правительство заданийĕ тăрăх заем çинчен вăйлă шав пуçласа янă скер, заем сарнă предприяти пĕтĕм çĕршывĕпе те тупайман. Çавна пула хаçат куçкĕретĕнех жуликла ĕç туса илет, вăл çапла пĕлтернĕ: «Пĕр заводри мĕнпур рабочисенчен 75 процентĕ заем илме çыраннă, тепĕр заводра 60 процент çыранна», тенĕ. Заводсен ячĕсене, паллах, асăрханас майпа кăтартман.

Финляндин черетлĕ заемĕ путланса ларни финн халăхĕ гитлеровецсене сутăннă Рюти правительствин мероприятийĕсене хирĕç мĕнле бойкот тунине лайăх кăтартса парать. Финсем хăйсен юлашки укçисене гитлеровецсен хӳрешкисене пама килĕшмеççĕ.

22 парашют тата ытти хĕçпăшалсем тытса илнĕ.

* * *

Противник тылĕнче кĕрешекен Рызаенко лейтенант ертсе пыракан 4 красноармеец-разведчик çине 15 гитлеровец тапăннă. Пирĕн разведчиксем 13 нимĕçе вĕлерсе пĕтернĕ, трофейăсем тытса илнĕ, хăйсен чаçне пĕр çухатусăрах таврăннă.

* * *

Калинин облаçĕнче нимĕç войскисен тылĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен боеприпассем тиенĕ 200 лавне аркатса тăкнă. Çапăçура 100 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Румынсен 18-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 92-мĕш полкăн 2-мĕш батальонĕнчен тыткăна лекнĕ салтак Опришa Думитру çапла каласа панă: «Эпĕ çапăçусенче пулман, мĕншĕн тесен пĕрмаях оборонăн иккĕмĕш линийĕнче пулнă. Февралĕн 27-мĕшĕнче ирхине эпир совет листовкисене тупрăмăр, çав листовкăсене çĕрле самолетсем çинчен пăрахнă пулнă. Эпĕ пĕр листовкине илтĕм те Могорану сержанта патăм. Вăл виççĕмĕш отделенири 8 салтака хăй тавра пухрĕ те вĕсене листовкăна вуласа пачĕ. Часах вырăссем наступлени тума тытăнчĕç. Батальонра паника пуçланса кайрĕ. Чи малтан офицерсем тарчĕç, вĕсем хыççăн вара салтаксен пĕр пайĕ те тарчĕ. Пирĕн 200 салтак ним хирĕç тăмасăрах тыткăна парăнчĕç».

* * *

Сталино облаçĕнчи Закатное ялĕнчи колхозниксем нимĕç оккупанчĕсен тискер ĕçĕсемпе çаратăвĕсем çинчен акт çырнă. Актра çапла каланă: «Нимĕç бандичĕсем яла çĕмĕрсе тăкрĕç, мирлĕ халăха этемле мар çаратса тата асаплантарса пĕтерчĕç. 173 киле çунтарса янă, майракаллă шултра выльăхсене 243 пуç, 160 сысна, 1.550 чăххa, хурсене тата кăвакалсене хăваласа кайрĕç, ăшă тумтирсене, атă-пушмака, кил таврапĕнчи япаласене, продуктсене пĕтĕмпех туртса илчĕç. Нимĕçсем 63 çулти Е. Д. Саржевские, 18 çулти И. И. Кулянские, 65 çулти С. А. Бондаре, 37 çулти П. Х. Захаренкона, 42 çулти И. В. Зозуляна, 55 çулти Л. С. Зиме вĕлерчĕç».

* * *

Румынири Тыргу-Жиу хулана гитлеровецсем Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче аманнă хăйсен салтакĕсен госпиталĕ туса хунă. Нимĕçсем хулари гимназие, лицее, коммерчески шкула тата учительсен шкулне хупнă, пысăк çуртсене пурне те хăйсен аллине туртса илнĕ. Çав çуртсенче пуринче те лазаретсем уçнă. Хулари халăх гитлеровецсем çине тăшманла пăхать. Нумаях та пулмасть, сывалса тухакан нимĕç салтакĕсем базарта румын хресченĕсемпе çапăçма тытăннă. Юнлă тытăçу пулса иртнĕ, тытăçу вăхăтĕнче пуртăсемпе туясем йăтнă хресченсем 11 нимĕçе тата йĕрке тума хăтланакан 2 полицейские вĕлернĕ.

* * *

Сталинград облаçĕнчи çамрăксем воскресник туса ирттернĕ, вăл воскресникре 15.000 çын ытла пулнă. Воскресник вăхăтĕнче 1.713 тонна хура тимĕр тата 53 тонна тĕслĕ металл пухнă.

Мартăн 27-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Мартăн 27-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле паллă улшăнусемех те пулман.

* * *

Калинин фронтĕнчи участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем противника хирĕç вăйлă çапăçусем туса пыраççĕ. Мартăн 25-мĕшĕнче вĕсем нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 500 çынна яхăн тата 4 танк пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур. Тепĕр участокра пирĕн войскăсем хĕснине пула каялла чакса, противник çапăçу хирĕнче 450 виле тата 6 çĕмрĕк танк пăрахса хăварнă.

* * *

Пирĕн пĕр часть, халăх пурăнакан пунктран нимĕçсене хĕссе кăларса, тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 100 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ, 9 пулемет 11 автомат, 35 винтовка, 35.000 патрон,

Дояркăсен мухтава тивĕçлĕ ĕçĕсем

Хастарлă хĕрсем, ĕçшĕн çунакан çамрăксем Ева Александровăпа Дуся Андреева Етĕрне районĕнчи «Правда» колхозра дояркăсем пулса ĕçлеççĕ.

Çамрăк патриоткăсем отечественнăй вăрçă пуçланнă хыççăн татах та хĕрӳллĕнтерех ĕçлеме тытăнчĕç. Хăйсен ĕçне юратса, тимлĕн тунипе, иртнĕ çул вĕсем кашни сăвакан ĕнерен талăкра 10—15-шер литр сĕт суса илнĕ. Кăçал ĕнесен продуктивноçĕ татах та ӳсрĕ. «Динька», «Дочка» ятлă ĕнесенчен чаплă дояркăсем талăкра 18—20-шер литр сĕт суса илеççĕ.

1941 çулта фермăра пурĕ сăвакан ĕне 5 пулнă. Вĕсенчен план тăрăх 6 пин литр сĕт суса илмелле пулнă пулсан, Александровăпа Андреева дояркăсем планран ирттерсе 3.843 литр сĕт суса илнĕ. Хăйсен кăтартуллă ĕçĕшĕн вĕсем ĕçшĕн хушса тӳлемелли йĕркепе 843 литр сĕт илчĕç.

Çак çитĕнӳсемпе дояркăсем лăпланса лармаççĕ. Выльăхсен продуктивноçне хăпартассишĕн вĕсем татах та лайăхрах ĕçлеме тытăнчĕç. Ĕнесене, пĕчĕк ачана пăхнă пек, лайăх пăхаççĕ. Кăçал пăруланă виçĕ ĕнерен вĕсем çак иртнĕ уйăхсенче 1.113 литр сĕт суса илчĕç. Колхоз государствăна 1942 çулшăн сĕт памалли обязательствăна татрĕ.

— Эпир ирĕклĕ совет саманинче çуралса ӳснĕ. Хĕн-хур курман. Пирĕн умра тутă та савăнăçлă пурнăç, эпир хамăрăн пултарулăхсене анлăн сарма лайăх майсем пур вăхăтра пурăнатпăр. Нимĕç фашисчĕсем ăна пирĕнтен туртса илеймĕç,— теççĕ вĕсем.

В. ЛАЗАРЕВ.
И. ЛЬВОВ.

ÇАМРĂК ВЫЛЬĂХСЕН ШЕФĔСЕМ

КУКЕÇ. Хыркасси туллимар вăтам шкулĕнче вĕренекен пионерсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетни хальхи вăхăтра государствăн пысăк ĕçĕ пулса тăнине лайăх ăнланаççĕ. Вĕсем колхозсенчи çамрăк выльăхсене шефа илчĕç. Ку тĕлĕшпе пионерсем бригадăсем турĕç. Клава Михайлова ертсе пыракан бригада «Чапаевар» колхоз фермичи 3 пăрăва, 5 путеке, Вася Петров бригади «Стрела» колхозра 4 путеке, 2 пăрăва, Евдокия Васильева бригади «Актив» колхозра 4 пăрăва, 7 путеке, Вера Долгашева бригади «Рыкша» колхозра 12 сысна çурине шефа илнĕ.

«Стрела» колхозра хăшпĕр сурăхсем путекĕсене ĕмĕртмен, çавăнпа та путеккисем имшеркке пулнă. Василий Петров бригади фермăна çӳреме пуçласан 3ç йăлтах улшăннă. Бригадăри пионерсем ĕмĕртмен сурăхсене тытса ĕмĕртме пуçланă. Амăшĕн сĕчĕпе тăранайман путексене ĕне сĕчĕ ĕçтерме тытăннă. Вара путексем палăрмаллах мăнтăрлана пуçланă.

Пионер Вася Петров çамрăк выльăхсене юратса пăхать. Вăл, фермăри путексемпе пăрусене пăхнисĕр пуçне, тихасемшĕн те тăрăшать, вĕсен сывлăхĕпе интересленет. Халĕ вăл икĕ çамрăк тихана кӳлсе çӳреме вĕрентет.

Т. ЛОГИНОВ.

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

„Ачасене фашистла варварсенчен хӳтĕлер“

ВЛКСМ Центральный Комитечĕ ачасене фашистла варварсенчен хӳтĕлес темăпа мартăн 29-мĕшĕнче Советсен Çуртĕнче пысăк выставка уçать.

Выставкăн пĕрремĕш пайĕнче совет ачисен телейлĕ пурнăçне кăтартнă. Совет Союзĕнче ачасене юратаççĕ, вĕсене ăшшăн пăхса ӳстереççĕ. Фотографи çинче — савăнăçлă ачасен сăнĕсем. Кунта яслĕсенче, ачасен сачĕсенче, площадкăсенче ачасем мĕнле савăнăçлă пурăннине, вĕсем санаторисенче каннине, шкулта, ытарма çук лайăх лабораторисенче вĕреннине кăтартнă.

Выставкăн иккĕмĕш пайĕнче фашистсен ирсĕр ĕçĕсем курăнаççĕ, вĕсем чуна çӳçентереççĕ. Гитлеровецсем ачасене шеллемеççĕ.

Пĕр стэнд çинче нимĕçсем аркатнă шкулсен, музейсен, библиотекăсен ӳкерчĕкĕсене кăтартнă.

Унтан тĕрлĕ документсем, чуна çӳçентерекен документсем каяççĕ. Фотографи çинче: хăйсен асаплантарса вĕлернĕ амăшĕсемпе ашшĕсен виллисене ыталаса йĕрекен ачасем: Витя Черевичный — вăл ачана хăйĕн кăвакарчăнне нимĕçсене парасшăн мар пулнăшăн Ростов хулинче персе вĕлернĕ. Çакăнтах Керчь хулинче фашистсем персе пăрахнă 250 ача сăнĕсене те курма пулать.

Тăлăха юлнă ачасене Совет халăхĕ ашшĕ-амăшĕсем пекех юратса, ăшă кăмăлпа пăхать. Пысăк стэнд çинче патриоткăсен, ашшĕ-амăшĕсене çухатнă ачасене хăйсем патне пурăнма илнĕ патриоткăсен — «Красный богатырь» заводра ĕçлекен работницăсен пурнăçне кăтартса панă. (ТАСС).

СОВЕТ ХАЛĂХНЕ ТАВАНЛА ПУЛĂШУ ПАНИ. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи тата Аргентинăри халăх Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли тата фашистла оккупантсен тискерлĕхне тӳссе ирттернĕ граждăнсем валли пухса янă ăшă тумтирсен, медикаментсен тата тĕрлĕрен кучченеçсен пĕрремĕш партийĕ Куйбышев хулине çитнĕ. **Укерчĕк çинче:** врач М. М. Зархи тата медицина сестри В. П. Ермакова çав медикаментсене йышăнса сортласа хураççĕ.

Г. ШИРОКОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Укçа-тенкĕпе япала лотерейин тиражĕ

Мартăн 25-мĕшĕнче Мускавра Союзсен Çуртĕн Октябрьски залĕнче укçа-тенкĕпе япала лотерейин тиражĕ пуçланнă. Малтанхи вылява 39.500 выигрыш янă. Укçаллă выигрышсемсĕр пуçне çав кунхи вылявра хĕрарăм атă-пушмакĕсем 500 мăшăр тухнă.

Çав кунах пĕр билет çине 50.000 тенкĕ укçа тухнă. Тираж тата сакăр-тăхăр куна пымалла. (ТАСС).

Перекет кассисене укçа хуракансен йышĕ ӳсет

Ленинградри ĕççыннисем отечественнăй аслă вăрçă пуçланнăранпа перекет кассисене çĕнĕрен шурĕ 28 миллион тенкĕлĕх 12.000 вклад хунă. Вăл шутран 2.000 вклад çак 1942 çулти пĕрремĕш кварталта хунисем пулаççĕ.

(ТАСС).

Ĕçри туслăх

ВОРОШИЛОВГРАД, мартăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Фронт линийĕ çывăхранах иртет. Çапăçусем пыракан вырăнтан инçех те мар, Фетисовпа Кучеренко юлташсем ертсе пыракан шахтăсенче хĕрӳллĕ ĕç пырать. Горняксем пĕтĕм вăйран тăрăшса çĕр кăмрăкĕшĕн кĕрешеççĕ. Фетисов юлташăн шахтинче кĕске срокрах ствола тасатнă, электромеханически мастерскоя юсанă, виçĕ километр ытла чугунçул хывнă. Çав чугунçул рудник килкартине инçетри забойсемпе çыхăнтарать. Çак кунсенче стахановецсем кивĕ моторпа усă курса мотовоз тунă. Кучеренко заведующи пулса тăракан шахтăн коллективĕ те лайăх ĕçлет. Шахта планран ирттерсе çĕршер тонна ытла çĕр кăмрăкĕ кăларать.

Çывăхри станцисенче ĕçлекен рабочисем те горняксенчен юлмаççĕ. Вĕсем ĕçре горняксемпе туслашса, пĕтĕм вăйран çĕршыв валли ытларах топливо парассишĕн кĕрешеççĕ. Шахтăсем ытларах та ытларах кăмрăк кăларса параççĕ. Железнодорожниксем çав кăмрăка вăхăтра тиесе турттарса яма тăрăшаççĕ.

Горняксемпе железнодорожниксем май уявне çĕнĕрен çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Пĕрле пухăву туса, вĕсем пĕр-пĕрин ĕçĕсемпе паллашнă, конкретнăй обязательствăсем илнĕ. Шахтерсем çĕр кăмрăкĕ кăлармалли программăна 110 процент тултарма [illegible], транспортниксем çĕр кăмрăк тиесси планне 150 процента çити пурнăçлама сăмах панă. Ремонт ĕçĕсене хăвăртлатма, килхуçи хĕрарăмĕсенчен май уявĕ тĕлне горняксемпе железнодорожниксен çĕнĕ кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлеме йышăннă.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

СОВЕТ ЛЕТЧИКĔСЕН ÇĔНĔ ÇĔНТЕРĔВĔ

КАЛИНИН ФРОНЧĔ, мартăн 25-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Ĕнер Совет Информаци Бюровĕ пирĕн маттур летчиксем çĕнĕрен пысăк çĕнтерÿ туни çинчен пĕлтерчĕ.

Калинин фрончĕн пĕр участокĕнче хамăрăн чаçсен наступленине хÿтĕлесе пынă чух, пирĕн летчиксем — капитансем Песков, Ефремов, Дохов, Журин тата лейтенант Ловейкин противникăн 30 самолечĕпе тĕл пулнă. Тăшмансен йышĕ пысăк пулнине пăхмасăр, пирĕн летчиксем сывлăшра çапăçу пуçласа янă. Çапăçу 1500 километр çÿллĕшре пынă, вăл 25 минута тăсăлнă. Çапăçура пуçарулăх пирĕн летчиксенче пулнă. Тăшманăн пилĕк самолетне пĕтерсе тăкса, иккĕшне сиенлесе, совет летчикĕсем пĕр çухату та тумасăр хăйсен аэродромне таврăннă.

Çав пилĕк самолетăн, çав сталинла соколсен çĕнтерĕвĕ—пĕлÿпе хăюлăхăн çĕнтерĕвĕ. Капитан Песков ĕнтĕ пурĕ 280 боевой вĕçев тунă, вăл тăшманăн 12 самолетне пĕтерсе тăкнă. Капитан Ефремов 200 ытла боевой вĕçев тунă, тăшманăн 8 самолетне персе антарнă.

Тепĕр кунне тата тепĕр авиаподразделенири летчиксем пысăк çĕнтерÿ тунă. Старши лейтенантсен — Алкидов, Балкан тата Селищев летчиксен звени хамăрăн наступлени туса пыракан чаçсен малти позицине хÿтĕлеме боевой задани илнĕ. Совет истребителĕсем тăшман территорийĕ çинче «Юнкерс-88» йышши 18 самолетпа тата «Мессершмитт-109» йышши 9 самолетпа тĕл пулнă. Звено командирĕ Алкидов, тăшмансен йышĕ пысăк пулнине пăхмасăр, атакăна ыткăннă. Çапăçу тăшман территорийĕ çинче пынă. Малтанхи атакăрах тăшманăн «Юнкерс-88» йышши самолечĕсем иккĕшĕ пĕтнĕ, унтан тата икĕ «Юнкерсĕне» пĕр «Мессершмиттне» персе антарнă. Нимĕç самолечĕсем совет истребителĕсен атакине тÿсеймен, 40 минута çапăçнă хыççăн вĕсем бомбисене хăйсен войскисем çине пăрахнă та, сапаланса кайса, хăйсен аэродромĕсем еннелле тарнă.

Е. КОРЯВИЧЕВ.

Сывлăшри çапăçу

КАРЕЛИ ФРОНЧĔ, мартăн 25-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Нимĕç самолечĕсен эшелонĕсем пирĕн территори çине вĕçсе кĕме хăтланнă. Пĕрремĕш эшелонра 18 бомбардировщикпе 11 истребитель пулнă, иккĕмĕшĕнче — 12 бомбардировщикпе 6 истребитель, виççĕмĕшĕнче — 21 самолет пулнă.

Гитлеровецсене хирĕç пирĕн самолетсем çĕкленнĕ. Пĕр вăхăтрах темиçе çĕрте çапăçу пуçланса кайнă. Çĕр çинчен 7000 километр çÿлте эскадрилья комиссарĕ Селезнев тата Рябов летчик тăшманăн 4 «Мессершмиттне» тата 2 «Хейнкельне» атакăланă. Нимĕçсем çухалса кайса хăвăртрах тарма тытăннă. Анчах та пурте мар тарса хăтăлнă. Селезнев пулемечĕ пуля çумăрĕ сутарса тăнă. Фашистсен пĕр машини çунма тытăннă, сулăнса кайнă та чикеленсе-чикеленсе çĕр çине тирĕннĕ.

Пирĕн истребительсем 11-ĕн кăна пулин те, нимĕçсен 29 самолечĕпе хăюллăн çапăçма тытăннă. Аста маневрсем туса, вĕсем нимĕçсене унтан та кунтан та пыра-пыра çапнă. Тÿпе питĕ пысăк факел çутнă пек çуталса кайнă — тăшманăн «Юнкерс-88» йышши самолечĕ ялкăшса çунма тытăннă та чул пек çĕр çине тирĕннĕ.

Çапăçнă çĕре тăшман самолечĕсен иккĕмĕш эшелонĕ пырса çитнĕ. Сывлăшри çапăçу вăйлăланнăçемĕн вăйлăланса пынă. Нимĕçсен истребителĕсемпе бомбардировщикĕсем пĕрин хыççăн тепри стройран тухма тытăннă.

Фашистсем нимĕн тума аптăраса ун-кун вĕçкеленĕ, вĕсем сахалтарах çухату туса çапăçуран тухма тăрăшнă. Анчах та вĕсем тăрăшни ăнăçлă пулман. Сывлăшра пеникчен хăтăлсан та вĕсем зенитнăй батарейăсем пеникчен хăтăлайман. Совет артиллеристĕсем нимĕçсене маневр тума, пирĕн самолетсенчен тарма паман.

15—20 минутăна пынă сывлăшри çапăçусенче Селезнев, Конпевой, Иванов, Рябов, Павлов летчиксем нимĕçсен 5 самолетне персе антарнă. Коваленко, Курзенков, Семенов, Степанов, Реутов летчиксем кашни пĕрер самолет пĕтерсе тăкнă. Фашистсен икĕ самолетне пысăк сиен кÿнĕ, вĕсем хăйсен базине çитеймесĕрех çĕр çине тирĕннĕ пулмалла.

Фашистсен самолечĕсен виççĕмĕш ушкăнне пирĕн истребительсем çапăçу пулса иртнĕ вырăнтан таçта инçетрех кĕтсе илнĕ. Вăл ушкăна сапаласа ярса каялла тартнă.

В. ЛЕЗИН.

Тăшманăн хирĕç тăмалли çирĕплетнĕ вырăнне штурмлани

КАНТАР-ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, мартăн 24-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Пирĕн войскăсем çапмине тÿсеймесĕр, тăшман каялла чакнă. Пĕр ялта унăн малтарах тухса ларнă ДЗОТ-сем пулнă. [illegible]

сем урса кайсах автоматсенчен пеме тытăнаççĕ. Ревин юлташ, çĕр тăрăх йăпшăнса пырса, блиндаж патне сывхарать те гранатăсен çыххине вăркăнтарать. [illegible]

Г. КОГЕЛЬМАН.

Танка хирĕç пемелли пăшалпа тăшманăн самолетне персе ÿкерни

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, (Телефонпа, хамăр спецкортан). [illegible] сывлăшри тăшман çине ушкăн-ушкăнăн, хăшпĕр чухне пĕччĕншерĕн те, пултаруллăн перессĕ.

Çак кунсенче иккĕмĕш рангри техник-интендант Голомидов автоматран персе фашистсен истребительне ÿкернĕ. Ывăç çумне пытанса тата автомата турат çине хурса, Голомидов истребитель ытла çÿлтех те мар çаврăна-çаврăна вĕçсе сывхарса пынине чăтăмлăн кĕтсе [illegible] Фронтăн пĕр участокĕнче противотанковăй пăшалран ушкăнпа персе, пĕр кун хушшинче тăшманăн 9 самолетне ÿкернĕ. Батраков юлташ ертсе пыракан чаçра çав пăшалпа уйрăмăнах ăнăçлăн усă кураççĕ. Старши лейтенант Крючков юлташ ертсе пыракан подразделени темиçе кун хушшинче нимĕçсен 4 самолетне персе антарнă.

(«Красная Звезда» хаçатран).

„Пионер Чувашии" танк тума укçа пухаççĕ

КАНАШ. («Хамăр корр., телефонпа). Етĕрне хуликчи пионерсем «Пионер Чувашии» танк тумашкăн укçа пухма чĕнсе каланине Асхва, Вăтакас Татмăш, Сиккасси тата Карăклă шкулĕсенче вĕренекенсем хавасланса кĕтсе илчĕç. Чĕнĕве сÿтсе-явнă хыççăнах Вăтакас Татмăш тулли мар вăтам шкулĕнчи пионерсем танк тума 106 тенкĕ, Асхва пуçламăш шкулĕнчи пионерсем 170 тенкĕ, Сиккасси вăтам шкулĕнчи пионерсем 300 тенкĕ укçа пухрĕç. Ку ĕçе уйрăмăнах комсомолăн Сиккасси вăтам шкулĕ çумĕнчи организацийĕн секретарĕ Степанов юлташ лайăх организацилерĕ.

«Пионер Чувашии» танк тума укçа пухасси районри пур шкулсенче те пулса пырать.

П. НИКОЛАЕВ.

РУМЫНИПЕ ВЕНГРИ ХУШШИНЧИ ХИРĔÇÿСЕМ ÇИВĔЧЛЕНСЕ ÇИТНĔ

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 26-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Бернри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Германин ют çĕршывсен ĕçĕсен министерствинче çапла каланă: Трансильванине пайласа уйăрас ыйту тĕлĕшпе Венăри арбитража тивекен «хăшпĕр ыйтусене халĕ те татса парайман-ха», тенĕ. Румыни пичечĕ çапла çирĕплетсе çырать: çав заявлени вăл — Румыния Германирен Трансильвани ыйтăвне тепĕр хут пăхса тухма ыйтнине пĕлтерет, тет. Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ çакна палăртать: Румыния Çурçĕр Трансильванире хăй илме тăрăшнине чылай мероприятисем йышăнса çирĕплетме васкарĕ, уйрăмăн илсе кăтартсан, обязательнăй йĕркепе çар ĕçне вĕренес срока 6 уйăха тăснă тата çар службин срокне 6 çул таран ÿстернĕ.

Венгрин Берлинри посланникĕ иртнĕ эрнере Будапешта инструкцисем илме тухса кайнă. Корреспондент çырнă тăрăх, пур енчен те çакă сисĕнет: Венгрия Румыние хирĕç тăма Болгарирен пулăшу илесшĕн тăрăшать.

Румынипе Венгри çарĕсен чаçĕсем пĕр-перинпе тытăçса илни

АНКАРА, мартăн 26-мĕш. (ТАСС). Лайăх пĕлсе тăракан ушкăнсенче çапла калаççĕ: Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче нумаях пулмасть румынсен пĕр чаçĕ хăйсемпе юнашар тăнă венгерсен чаçĕпе вăйлăн тытăçса илнĕ. Салтавĕ çакăнтан тухнă: салтаксем пĕр-перинпе Трансильвани камăн пулмалли çинчен тавлашăва кĕрсе кайнă. Пĕр-перне кÿрентерсе намăслантарма пуçласан, салтаксем хĕçпăшал ярса тытнă. Тытăçу мĕнтери пысăк пулнине çакăн пек факт лайăх кăтартса парать: венгерсем хăйсен артиллерине ĕçе янă, румынсем вăрмана тарса пĕтнĕ. Тытăçу вырăнĕнче икĕ енĕн те çĕр çын таран вилсе юлнă. Нимĕçсен командованийĕ кăларнă приказ тăрăх фронтăн çак «инцидент» пулса иртнĕ участокне итальянецсен чаçне янă. Итальянецсен чаçĕ венгерсемпе румынсем хушшинчи участока йышăннă.

Тата çакна асăрхаттараççĕ: Михаил Антонеску хăйĕн Венгрие хирĕçле сĕмахне çак тытăçу пулнă хыççăн нумай мар вăхăт иртсен тухса каланă,—теççĕ.

Турци хаçачĕсем тĕнĕл держависен лагерĕнчи харкашу çинчен мĕн çыраççĕ

СТАМБУЛ, мартăн 25-мĕш. (ТАСС). Турци пичечĕ тĕнĕл держависен лагерĕнче çивĕчленсе пыракан харкашу çинчен ытларах та ытларах çырма пуçларĕ. «Хабер» хаçатра Ялчин çапла çырать: «Тĕнчене çĕнĕ йĕрке» туса паратпăр текенсерсем вĕсем хăйсем хушшинче те пулин килĕшÿллĕ пурнăçпа йĕркелĕх тăваймаççĕ. «Пыл уйăхĕн» йăпатакан кунĕсем иртсе кайрĕç. Пурнăç йĕркипе çырлахман кунсем çитрĕç. Нимĕçсен Роммель генералне тĕнĕл держависен Çурçĕр Африкăри пĕрлештернĕ вăйĕсен командующийĕ туса хуни итальянецсем тарăхнине вĕçне çитиех çивĕчлентерчĕ. Ĕнтĕ пурте пĕлеççĕ: нимĕçсемшĕн вĕсен «юратнă союзникĕсем—итальянецсем», мăнкăмăлласа кулма тивĕçлĕ объектсем шутĕнче çеç тăрса юлнăскерсем, анекдотсем туртса кăлармалли темăсем кăна пулса тăчĕç. Аслă Италин икĕ çул вăрçнă хыççăн аялалла вăркăнса Румынипе танлашмалла пулчĕ». Ялчин шухăшĕпе, çакă вăл итальянецсемпе нимĕçсем хушшинче пысăк хирĕçÿсемех кăларса яма пултарать.

Румынипе Венгри пĕр-перинпе мĕнле хутшăнса пурăнни çинчен каланă май Ялчин çапла çырать: «Тройственнăй пакт тĕлĕшпе тус пулса кайнă икĕ «партнер» хушшинче хура кушак каçса кайнă. Венгерсемпе румынсем хушшинче ку таранччен пынă икĕ тĕрлĕ шухăшсем,—вăл пах Германи çуркуннехи операцисене хатĕрленнĕ вăхăтра,—палăрса тăракан хăрушă хирĕçÿ чĕртсе ячĕç. Германи хăйне пулăшу парасса шанса тăнă икĕ çĕршыв пĕр-перинпе вилес пек тытăçса ÿкес патне умĕнче тăраççĕ».

Финсен правителĕсем Финляндие катастрофа патне илсе пыраççĕ

СТОКГОЛЬМ, мартăн 26-мĕш. (ТАСС). Швецсен «Свенск Тидскрифт» журналĕнче финсен юстици министрĕ пулнă Седергольмăн статьине пичетлесе кăларнă. Ку статьяра вăл, ытти ĕçсем çинчен çырнă хушăрах, финсен хальхи правителĕсен сутăнчăкла ирсĕр политикине лайăх кăтартса парать. «Мускавра мир çинчен договор тусанах,—тесе çырать Седергольм,—Финляндия хăйĕн мĕнпур материальнăй резервĕсене тата чĕрĕ вăйне те пĕтĕмĕшпех çĕнĕ «Маннергейм линине» тăвас ĕçе ячĕ». Седергольм çырнă тăрăх, вăрçă ĕçне каякан питех те пысăк расходсем финн халăхĕшĕн чăтма çук йывăр çĕклем пулса тăчĕç. Статьяра çакă та курăнса тăрать: Финлянди правителĕсен вăрă-хурахла шайки вăрçа хатĕрленес ĕçе халăхран вăртăн туса пынă. Седергольм малалла çакна палла туса хăварать: гитлеровецсем Совет Союзне «çиçĕмле хăвăрт» çĕнтерĕç тесе шанни чăсах пăрахăçа тухрĕ те, Финляндия питех те пысăк йывăрлăхсем умне çитсе тăчĕ. «Финляндин халăхĕн вăхăтри тĕп çитменлĕхĕ вăл—снабжени,—тесе çырать Седергольм—Финляндия нумайччен ăна Швеция мĕн кирлине пурне те парса пырĕ тесе шанса тăчĕ. Мĕскĕн правительсен шухăшĕпе, Петсамо урлă каякан тинĕс çулĕ Финляндишĕн усă юлмалла пулнă, вара çав çулпа вĕсем кĕтекен пулăшу чиперех пырса тăмалла пулнă. Халĕ эпир çав шанчăксем ахалех пулнине лайăх пĕлетпĕр. Финн халăхĕ çине тиенекен вăрçă йывăрлăхĕсем кунсеренех ÿссе пыраççĕ. Снабжени начарланнăçемĕн начарланса пырать. Ĕç вăйĕ, чĕрчунсем, тракторсем çитменни питех те вăйлăн сисĕнет»,—тесе çырать хăйĕн статьинче Седергольм.

Юлашкинчен Седергольм çакна паллă тăвать: Финн халăхĕн анлă сийĕсем хăвăртрах вăрçма пăрахса килĕшÿ тăвасси çинчен ытларах та ытларах шухăшлама тытăнаççĕ.

ФИНСЕН ГОСУДАРСТВО ЗАЕМĔ ПУТЛАНСА ЛАРНИ

СТОКГОЛЬМ, мартăн 26-мĕш. (ТАСС). Финсен фашистла правительстви Совет Союзне хирĕç пыракан вăрçа тăсма кирлĕ укçа-тенке чухăна юлнă халăхран пухмашкăн тата тепĕр хут хăтланса пăхнă. Мартăн 1-мĕшĕнче çĕнĕрен государство заемĕ мĕнпурĕ 2 миллиард маркăлăх кăларнă. Анчах халăх çак заема кĕретĕнех сивлет, вăл çапла майпа Совет Союзне хирĕç пыракан вăрçă çине хăй мĕнле пăхнине уççăн палăртать. Çав заем намăсла путланса ларнине çак факт та лайăх кăтартса парать: мартăн 1-мĕшĕнчен пуçласа ку таранччен заема кăларнă хисепрен виççĕмĕш пайне те сарайман. Çав суммăран та пулин чи пысăк пайĕ банксемпе предприятисем çине ÿкет, мĕншĕн тесен вĕсен заем облигацийĕсене обязательнăй йĕркепе илмелле пулнă.

Гитлеровецсем Францие çаратаççĕ

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 26-мĕш. (ТАСС). Пĕр çулçÿревçĕ, Францирен килнĕскер, «Нью-Йорк таймс» хаçатра çапла çырса каласа парать: нимĕçсем Францин оккупацилемен пайĕнче хăйсен контрольнăй комиссийĕсене çавтери сарса янă, çав комиссисенче ĕçлекенсен хисепĕ час-часах Виши правительствин вырăнти чиновникĕсен хисепĕнчен те иртсе каять. Çавăн пек комиссисем, сăмахран, Виши, Клермон-Феран, Тулуза, Сент-Этьен, Лион, Ницца, Тулон, Марсель хулисенче пур, вĕсем çавнашкалах тата хуçалăх тĕлĕшĕнчен паллă вырăн йышăнса тăракан ытти чылай пунктсенче те пур.

Марсельре гитлеровецсен «контрольнăй комиссийĕн» официальнăй штабĕ хăй кăна 100 çынран тăрать. Çав çынсен ĕçĕ — аэродромсемпе паха предприятисен ĕçне, «доброволецсене» Çурçĕр Африкăна янине пăхса сăнаса тăрасси пулса тăрать. Вĕсем тата «деголлевецсене сăнаса тăраççĕ», Марсель портĕнче килекен суднăсене йышăнаççĕ, каяканнисене ăсатаççĕ тата портри полицин ĕçĕсене сăнаса тăраççĕ.

Марсельре ятарласа тунă «Экспертсен комиссийĕ» Марсель портне Франци суднисем илсе пыракан таварсен миçемĕш пайне нимĕç агенчĕсен аллине памаллине кăтартса парать. Порта илсе пынă кашни грузран çавăн пек «пай» кирек хăçан тенĕ пекех 60—80 процент чухлĕ пулать. Анчах та час-часах гитлерла Германи валли мĕнпур груза конфискацилеççĕ. Хăш чухне çав конфискациленĕ грузсен пĕчĕк пайне итальянецсене параççĕ.

Марсель портне Çурçĕр Африкăран сысна какайĕ, çырла-çимĕçсем, пахча-çимĕçсем, эрех, çу, çăмартасем илсе пыраççĕ. Çак продуктсене гитлеровецсен комиссийĕ вара порта пырса çитсенех конфискацилет те Германие ярать е вĕсене Францин шалти хулисене, вĕсенче вырнаçнă нимĕç гарнизонĕсем валли ăсатать. Марсель халăхĕ, Францин ытти хулисенчи халăх пекех выçă лараканскер, гитлеровецсен комиссийĕсен çавăн пек «контрольле» ĕçĕсемшĕн тарăхать; çав комиссисем вĕсем Францин «ирĕклĕ зони» текен пайĕнче пуçĕпех тата пĕр чарусăр хуçаланаççĕ.

Бивербрук Америкăна çитнĕ

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 26-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Майамăран (Флорида штатĕ) çапла пĕлтерет: кунта Бивербрук çитнĕ. Вăл Европăран самолетпа вĕçсе килнĕ. Чи çывăх вăхăтрах Бивербрук кунтан Вашингтона тухса каять.

Гитлеровецсем Эстонире хуçаланни

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 26-мĕш. (ТАСС). «Крисчен сайенс монитор» хаçат илнĕ сведенисем тăрăх, Эстонире пурнăç чăтма çук йывăрланса çитнĕ. Нимĕçсем Эстонин çĕршывне пĕтĕмпех çаратнă, вĕсем, ним хака та тăман хут маркăсене кашнине 10 тенкĕ укçа вырăнне çÿретсе, Эстонири пур пек таварсене пĕтĕмпех «сутăн илнĕ». Нимĕçсем арçынсене кăна мар, хĕрарăмсене те ирĕксĕрлесе ĕçе хăвалаççĕ. 1918 çулта та нимĕçсен оккупацийне тÿссе иртнĕ эстонецсем хальхи оккупацие ĕлĕкхинчен чылай йывăртарах, теççĕ. Халăхсем çавтери тарăхаççĕ. Гитлеровецсем эстонецсене «коммунистсем» тесе массăллăн арестлеççĕ.

РУМЫНИРИ ПОЛИТИКĂЛЛĂ ТЕРРОР

СТАМБУЛ, мартăн 26-мĕш. (ТАСС). Белградра тухса тăракан «Донау цейтунг» хаçат Румынире çынсене массăллăн арестлени çинчен пĕлтерет. Çак кунсенче Румынин тĕрлĕ пункчĕсенче çĕршыван обществăпа политика ĕçĕсенче ĕçлекен паллă деятелĕсене 95 çынна тытса хупнă. Тытса хупнисем хушшинче — пропаганда министрĕ пулнă Титеану тата Калинеску кабинечĕн секретарĕ Радуомобль.

Вăтаçĕр тинĕс çинчи çапăçу

ЛОНДОН, мартăн 25-мĕш. (ТАСС). Англин тинĕс министерстви коммюнике кăларнă, çав коммюникере мартăн 22, 23, 24-мĕшĕсенче Вăтаçĕр тинĕс çинче пулса иртнĕ операцисем çинчен тĕплĕн çырса кăтартнă. Çав операцисем Мальтăна çар пурлăхĕсем илсе пынă суднăсен пысăк караванĕн рейсĕпе çыхăннă пулнă.

Мартăн 22-мĕшĕнче кăнтăрла тăшманăн крейсерĕсем курăнса кайнă, вĕсем тăваттăн пулнă. Англин çăмăл крейсерĕсемпе эсминецĕсем çавăнтах вĕсене атакăланă та вĕсем вара каравана та, каравана хÿтĕлесе пыракан карапсене те пĕр сиен тумасăрах каялла çаврăнса кусран çухалнă. Кăнтăрла сулăнсан 4 сехетре тăшманăн карапĕсем каллех килсе тухнă. Вĕсенчен пĕри «Литторио» йышши линкор, иккĕшĕ 8 дюймлă орудисемпе хĕçпăшалланнă йывăр крейсерсем, тăваттăшĕ ахаль крейсерсем пулнă. Ахаль крейсерсемпе пĕрле тата эсминецсем те пулнă. Тăшманăн вăйĕсем ытларах пулнă пулин те, çăмăл крейсерсемпе эсминецсем, каравана хÿтĕлесе, тăшманăн карапĕсем çине ыткăннă. Ăнăçлă операци туса, эсминецсем тăшманăн патне çывхарнă та çитмĕ виçĕ миля юлсан торпедăпа атакăлама тытăннă. Çакăн пек вăйлă атакăна пула, тăшман, хăйĕн вăйĕсем ытларах пулнă пулсан та, пысăк çухатусем тÿснĕ. Вăл çухалса кайса каялла чакнă. «Литторио» йышши линкора торпеда лекнĕ, çав карап çинех тата Англин крейсерĕсенчен пенĕ снарядсем те лекнĕ, вăл вара çунма тытăннă. Тăшманăн пĕр крейсерне пысăк сиен кÿнĕ, тепĕр крейсерне те торпеда тивнĕ.

Англин карапĕсем тĕтĕм ярса хăйсем ăçта тăннине палăртман, çавăнпа та тăшман вĕсене пысăк сиен тăвайман. Пĕр крейсерпа виçĕ эсминеца кăна пăртак сиен кÿнĕ. Çухатусем пысăках мар. Çапăçу иртсен Италин флочĕ урăх вара караван çине тапăнман, хăй базине таврăннă.

Мартăн 22-мĕшĕнче каравана тата ăна хÿтĕлесе пыракан çар карапĕсене татти-сыпписĕр сывлăшран атакăланă. Çав атакăра 150 яхăн бомбардировщик пулнă тесе шутлаççĕ. Апла пулсан та, çар карапĕсене те, ахаль суднăсене те пĕрне те сиен тăвайман.

Мартăн 23-мĕшĕнче караван çине каллех сывлăшран тапăннă. Хальхинче вара пĕр карапа сиен кÿнĕ, вăл каярахпа путнă. Пĕр эсминеца та бомба лекнĕ, анчах та вăл çавах ăнăçлăнах порта çитнĕ. Мартăн 24-мĕшĕнче тăшман каллех сывлăшран атакăлама тытăннă, анчах та ку расра вăл сиен тăвайман.

Гитлеровецсем Риомри процесс пирки тарăхаççĕ

ЛОНДОН, мартăн 26-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин дипломатиллĕ ĕçсем çинчен çыраканĕ çапла калать: Германия Риомри процесра вăрçă пуçланăшăн пĕтĕм ответлăха Франци çине йăвантаракан приговор йышăнтарма май пулĕ тесе шанса тăнă, анчах çак ĕç пĕре те ăнăçлă пулман.

Берлин çав процеса ĕнтĕ пĕтерселартма та шутлать, тенĕ сăмах çÿрет. Блюм, Даладье тата ытти айăпланакансем те хăйсене айăпланине генеральнăй штаба тата çар влаçĕсене айăплас çулпа пăрса янă. Францин оккупацилемен зонинче пичет валли çырнă инструкцисем (вĕсем çинчен халь Лондонра пĕлнĕ) çакна кăтартса параççĕ: Виши правительстви Петэна ырăн кăтартма, Блюмпа Даладьене тыт. те питлеме, Франция вăрçа хатĕр пулманшăн пĕр вĕсем кăна айăплă пулнă пек кăтартма тăрăшать.

ЛОНДОН, мартăн 26-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Берлинра ĕнтĕ Риомри процеса пĕтерселартасси е ăна нумай вăхăта чарса лартасси çинчен калаçкалаççĕ. Малтанлăха çав процеса апрелĕн 2-мĕшĕнчен пуçласа 14-мĕшчен чарса лартĕç, тесе калаççĕ.

Англи авиацийĕ Рур çине вĕçсе пырса тапăнни

ЛОНДОН, мартăн 26-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: кунта çитнĕ сведенисем тăрăх, мартăн 26-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Германи территорийĕ çине вĕçсе кайса тапăннă. Бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем Рур облаçĕ çине бомбăсем вăйлăн пăрахнă.

Авиаци министерстви паян ирхине кăларнă коммюникере çапла каланă: противникăн авиацийĕ иртнĕ çĕрпе Англин Кăнтăр-Хĕвелтухăç енчи тата Кăнтăрти çыранĕсен районĕсем çинче хăшпĕр активлăха палăртнă. Самолетсем пăрахнă бомбăсем тунă сиен пысăках мар, халăх хушшинче вилнисем е аманнисем çук.

ЛОНДОН, мартăн 26-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, çакăн пек сведенисем пур: мартăн 26-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле англичансем Рур çине вĕçсе кайса тапăннă операцире вĕсен 100 бомбардировщик пулнă.

ЯПОНЕЦСЕМ АНДАМАН УТРАВĔСЕНЕ ОККУПАЦИЛЕНĔ

ЛОНДОН, мартăн 25-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Делирен пĕлтернĕ тăрăх, японецсем Инди океанĕн хĕвелтухăç пайĕнче ларакан Андаман утравĕсене оккупациленĕ.

* * *

Андаман утравĕсем вĕсем Бенгали заливĕ çывăхĕнче, Бирмăн çыран хĕрринчен 300 километрта лараççĕ. Андаман утравĕсен шутне Северный, Средний тата Южный ятлă утравсем кĕреççĕ; пăртак кăнтăрарах Кĕçĕн Андаман утравĕпе 50 яхăн пĕчĕк утравсем лараççĕ. Çак утравсене пĕр-перинчен ансăр проливсем уйăрса тăраççĕ. Вĕсен пĕтĕм лаптăкĕ—6.497 квадратлă километр. Вĕсем çинче пурĕ 15 пин çынна яхăн пурăнать. Çав утравсем вĕсем Англин Индири владенийĕсен шутне кĕреççĕ. Халăх пурăнакан тĕп пункт—Блер порчĕ. Çав утравсем çинчен ытти çĕрсене строительство валли йывăçсем тата кокос мăйăрĕсем ăсатаççĕ.

ФИЛИППИНА ХÿТĔЛЕНИ

ВАШИНГТОН, мартăн 23-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Филиппинри верховнăй комиссарĕ Сэйр, Филиппин утравĕсем çинчен нумаях пулмасть килсе çитнĕскер, Рузвельт патĕнче пулнă.

Пичетĕн представителĕсемпе калаçнă чухне Сэйр çапла каланă: японецсем хальхи вăхăтра Филиппин территорин çуррине кăна йышăнса тăраççĕ. Лусон утравĕн çурçĕр пайĕнче тата Филиппинăн кăнтăр пайĕнче партизансен отрячĕсем организациленĕ. Америка войскисемпе Япони войскисен вăйĕсем пĕр пекрех пулнă чухне кирек хăçан та американецсем çиеле тухнă. Филиппин войскисем те лайăх çапăçаççĕ.

Японецсем Корригидор крепоçне тытса илме тапăнасси пирки Сэйр иккĕленсе каланă, мĕншĕн тесессĕн апла тума хăтланни японецсене пысăк çухатусем тÿстернĕ пулĕччĕ, тенĕ. Çавăнпа та, — тенĕ малалла Сэйр, — японецсем хăйсен войскисене Австралие хирĕç яма шут тытнă, çакă вăл Филиппина хирĕç çапăçассинчен усăллăрах пулĕ тесе шутланă курăнать вĕсем.

Батаана хÿтĕлесси çинчен панă ыйтăва хирĕç Сэйр çапла ответленĕ: Австралие тата Филиппина подкреплениссем ярасси питĕ йывăр задача пулса тăрать, анчах çапах та Пĕрлешÿллĕ Штатсем çав задачăна пурнăçламашкăн мĕн тума май пуррине пурне те тăваççĕ.

Малалла Сэйр çакна кăтартса панă; японецсем Манилăна йышăнса илнĕ чухне унта 1.500 американеца яхăн тата темиçе çĕр англичанин пулнă. Сэйр каланă тăрăх, Америка войскисемпе Филиппин войскисен шухăш-кăмăлĕсем питĕ лайăх, вĕсем японецсене вăйлăн пыра-пыра çапаççĕ.

Греци правительствин вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, мартăн 26-мĕш. (ТАСС). «Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçатăн дипломатиллĕ ĕçсем çинчен çыраканĕ каланă тăрăх, Грецин Лондонри правительстви Греци тулашĕнче пурăнакан пур грексене те, уйрăмăн илсен — Египетра пурăнаканнисене те (Египетра вĕсем халăхăн чылай пысăк процентĕ пулса тăраççĕ), çара илнĕ.

Канада войскисем Англие çитнĕ

ЛОНДОН, мартăн 26-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Англие Канадăн Англири войскисене вăйлатма çĕнĕ подкреплениссем ăнăçлăн çитнĕ. Вĕсен шутĕнче темиçе çĕр çын Канада летчикĕсем, çавăн пекех тата Польшăпа Голланди салтакĕсем.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

В соответствии с указанием Государственной Штатной Комиссии при Совнаркоме Союза ССР и Народного Комиссариата Финансов Союза ССР от 20 марта 1942 г. за № 191

все учреждения, предприятия и организации

Чувашской АССР обязаны не позднее 1 мая 1942 г. ЗАРЕГИСТРИРОВАТЬ в соответствующих финансовых органах штаты, ставки и фонды заработной платы, а также сметы административно хозяйственных расходов, утвержденных на 1942 год.

Регистрация проводится в порядке, установленном инструкцией Наркомфина СССР от 31 марта 1941 года за № 246. /36.

НАРКОМФИН.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НХ 81 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6. 58 64.